К83.9
С79
Н-66567

ИЛЬЯ СТЕПАНОВ
САНТӐР АКСАР

# АКӐШСЕМ ТЕ ИШЕҪҪӖ ПӖРЛЕ

ЮРӐСЕМ



ИЛЬЯ СТЕПАНОВ
САНТӐР АКСАР

# АКӐШСЕМ ТЕ ИШЕҪҪӖ ПӖРЛЕ

## ЮРӐСЕМ

ШУПАШКАР
2006

ББК 85.94 (2 Рос. Чув) я 438
С 794

Илья Степанов, Сантăр Аксар. Акăшсем те ишеççĕ пĕрле. Юрăсем. – Шупашкар, 2006. – с.

Кĕнекене Илья Степанов композиторăн Сантăр Аксар сăввисем тăрăх çырнă юррисене кĕртнĕ.

© Илья Степанов (Степанов И.Р.), 2006
© Сантăр Аксар (Мефодьев А.И.), 2006

# КĔВĔ ÇУЛĔПЕ АЛЛА-АЛЛĂН

Юрă икĕ пайран тăни пуриншĕн те паллă. Пĕри вĕсенчен – сăвви, тепри – кĕвви. Сăввине поэт хайлать, кĕввине – композитор. Лайăх юрăра сăмахĕсемпе çеммине пĕр-пĕринчен уйăрма йывăр. Вĕсем тытăмĕпе те, сюжечĕпе те, шухăшĕпе те, илемĕпе те тачă çыхăнура тăраççĕ. Пĕр-пĕрне витĕм параççĕ, сăнарлăх парнелеççĕ, хайлава çепĕçлĕхпе илĕртӳлĕх кӳреççĕ.

Сăвăçпа юрă-кĕвĕ ăсти пултарулăх каçалăкĕнче пĕрле мĕн чухлĕ çураçуллăрах та тăрăшуллăрах тимлеççĕ, вĕсен кĕркунне тырри-пулли те çавăн чухлĕ вăйлăрах та тулăхрах çитĕнет. Ӳнерçĕсен пĕрлехи симлĕ çимĕçне халăх яланах хапăл туса йышăнать. Шăпах çакнашкал туслăх сыпăнтарса, пĕрлештерсе тăрать те ĕнтĕ Сантăр Аксар сăвăçпа Илья Степанов композитора.

Кĕвĕ çулĕпе алла-аллăн, килĕштерсе утаççĕ Илья Степановпа Сантăр Аксар. Вĕсем пĕрле 25 юрă çырчĕç. Хайлавĕсем пурте çак кĕнекере пичетленеççĕ. Эпир вĕсене çавна май пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, пултарулăхра çĕнĕ çитĕнӳсем сунатпăр.

**Вилорик Романов,**
истори ăслăлăхĕсен докторĕ,
ЧР Композиторсен ассоциацийĕн членĕ,
ЧР вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.



**Степанов Илья Романович** – Чăваш Республикин Композиторсен ассоциацийĕн членĕ, паллă композитор, педагог, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Вăл 1941 çулхи кăрлачăн 23-мĕшĕнче Чăваш Республикине кĕрекен Красноармейски районĕнчи Кушкă ялĕнче çуралнă. Малтан тăван ялти 8 çул вĕренмелли, кайран Мăн Шетмĕри вăтам шкулсенче пĕлӳ илнĕ.

1971 çулта Чăваш республикинчи культурăпа çутĕç училищине пĕтернĕ. Çĕрпӳпе Муркаш районĕсенчи культура учрежденийĕсенче илемлĕх ертӳçинче вăй хунă. 1971 çултанпа Кушкăра пурнăать, шкулта музыкăна вюрентет, илемлĕ пултарулăх ушкăнне ертсе пырать.

Хайĕн малтанхи юрисене И. Р. Степанов шкулта вĕреннĕ чухнех çырнă. Пултарулăх ĕçĕнче ăна мухтавлă ентешĕ, чăвашсен чаплă композиторĕ Ф. М. Лукин нумай пулăшнă. Çавăн пекех А. М. Михайлов, Т. И. Фандеев тата ытти профессиллĕ музыка ăстисем те ыр канашсем парса сахал мар хавхалантарнă.

Пĕрремĕш хайлавĕ Унăн 1961 çулта «Çамрăк коммунист» хаçатра кун çути курнă, эфира вара 1962 çулта тухнă. Унтанпа вăл 1000 яхăн юрă хывнă. Пурте тенĕ пекех вĕсем хаçат-журналта çапăнса тухнă. Вĕсенчен чылайăшĕ халăхра анлăн сарăлнă. Çавсен шутĕнче – «Шурă хурăн», «Сана курсан», «Кĕтетĕп», «Шăпчăксем юрлаççĕ», «Савни килте пулмарĕ», «Çуралнă çĕршыв», «Савни мана каларĕ», «Шăнкăрав куракĕ», «Юрату сăмсахĕ», «Çул юхать, юхать» т.ыт.те. Вĕсен сăввисене Г. Орлов, В. Урдаш, В. Харитонов, Г. Чаржов, М. Васильева, Г. Ефимов, В. Пехил, Н. Карай тата И. Ахрат çырнă. Юлашки вăхăтра композитор Сантăр Аксар сăвăçпа тачă çыхăну тытать. Ун хайлавĕсем тăрăх çырнă 30 юрă çак кĕнекере пичетленет.

Композиторăн ачасем валли çырнă юррисем те чылай. Унăн 100 ытла хайлавне Чăвашрадио фончĕ валли çырса илнĕ, чылайăшне вĕренӳ кĕнекисене кĕртнĕ.

Композитор чăннипех те тĕрлĕ енлĕ пуян пурнăçпа пурăнать. Вăл концертсем йĕркелес, халăх хушшинче музыка пĕлĕвĕсене сарас, юрă-кĕвĕ уявĕсем ирттерес енĕпе хастарлăх кăтартать.



**Сантăр Аксар (Мефодьев Александр Иванович)** – Раççей çыравçисен тата журналисчĕсен Союзĕсен членĕ, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Трубина Мархви ячĕллĕ литература премийĕн лауреачĕ, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ.

Вăл 1938 çулхи чӳкĕн 28-мĕшĕнче Чăваш Республикине кĕрекен Патăрьел районĕнчи Еншик ялĕнче çуралнă. Малтан тăван ялти 7 çул вĕренмелли, кайран Шăнкăртамри вăтам шкулсенче пĕлӳ пухнă. 1961-1967 çулсенче – И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн аспиранчĕ.

А. И. Мефодьевăн ĕçлĕ пурнăçĕ 1956 çулхи çĕртме уйăхĕнче тăван ялти ял хуçалăх эртелĕнче ахаль колхозник пулса вăй хунинчен пуçланнă. Пĕр хушă вăл ял библиотекине ертсе пынă. Совет Çарĕнче хĕсметре тăнă. Салтакран таврăнсан Йĕреç районĕнчи «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» хаçат редакцийĕнче тата парти райкомĕн инструкторĕнче ĕçленĕ. 1962 çулхи авăнра А. И. Мефодьев тăван района куçса килнĕ те малтан «Авангард» хаçат редакцийĕнче, кайран КПСС райкомĕнче вăй хунă. Каярахпа чылай çул хушши партин чăваш обкомĕн культура пайĕн инструкторĕнче, «Хатĕр пул» журналăн тĕп редакторĕнче тăрăшнă. 1992 çултанпа И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче ĕçлет. 1998-2004 çулсенче кунти чăваш филологи факультетне ертсе пынă.

Сантăр Аксар литература ĕçне 50-мĕш çулсен пуçламăшĕнче тытăннă. «Кахал» ятлă пĕрремĕш сăвви 1954 çулта районти «Авангард» хаçатра çапăнса тухнă. Каярахпа унăн сăввисем, очеркĕсемпе статьисем республика хаçачĕсемпе журналĕсенче те пичетленме пуçланă. Вăл – поэт-юрăçă. Унăн сăввисем тăрăх Н. Эриванов, Ю. Кудаков, Ю. Жуков, Н. Тимофеев, В. Романов, Н. Заводскова, В. Адюков, Е. Кузьмина, И. Медведев композиторсем 40 ытла юрă çырнă. Юлашки çулсенче вăл И. Степанов композиторпа тачă çыхăнса ĕçлет. Вĕсен пĕрлех хайлавĕсем çак кĕнекере пичетленеççĕ.

Сантăр Аксар тăлмач пулнипе те паллă. Писатель вырăс, тутар тата мăкшă çыравçисен чылай сăвви-калавне, 20 яхăн илемлĕ кинофильм тексчĕсене чăвашла куçарнă.

Сантăр Аксар – 14 кĕнеке авторĕ. Вĕсем – илемлĕ сăмахлăхпа вĕренӳ кĕнекисем.

# АННЕМĔР, ЭСĔ – САР ХĔВЕЛ

**Васкамасăр**



## АННЕМĚР, ЭСĚ – САР ХĚВЕЛ

Аннемĕр, эс пĕртен пĕрре
Вышкайсăр аслă тĕнчере.
Çут çăлтăр евĕр ĕмĕрех
Çунатăн пирĕн чĕрере.

Аннемĕр, эсĕ – шурăмпуç,
Пин-пин шевлеллĕ сар хĕвел,
Чĕр кĕмĕл шывлă тăр çăлкуç,
Чи çутă ăраскал, телей.

Хĕвелсĕр шăтаймасть калча,
Папка та унсăр тухаймасть.
Аннесĕр ӳсеймест ача,
Пĕр паттăр та çуралаймасть.

Çиçеççĕ ăшшăн куçусеем –
Мĕн чуль ачашлăх вĕсенче.
Вăр-вар та çепĕç аллусем –
Çук ун пекки тек çĕр çинче.

Тĕнче илемĕпе пĕрле
Тăван чĕлхемĕр илемне
Туйма вĕрентрĕн пĕчĕклех,
Парса чăвашлăх хĕлхемне.

Сайра килетпĕр-çке яла,
Пире каçарччĕ, ан хурлан.
Сан умăнта, аннем, ялан
Эпир виçесĕр парăмра.

# ЭХ, МАТТУР ТА ЭС, ТĂВАН КĔТЕСĔМ!



## ЭХ, МАТТУР ТА ЭС, ТӐВАН КӖТЕСӖМ!

Хапха уҫӑлать-и шӑлтӑр-шӑлтӑр,
Машина кӗрлет-и хӑлтӑр-хӑлтӑр,
Ял хире куҫать-и кӑлтӑр-кӑлтӑр,
Тусан ҫӗкленет-и пӑлтӑр-пӑлтӑр –
Эх, хастар та эс, тӑван кӗтесӗм!

Уҫӑ ҫил вӗрет-и вӑшӑл-вӑшӑл,
Тырӑ хумханать-и чӑшӑл-чӑшӑл,
Пучахсем тӑваҫ-и пӑшӑл-пӑшӑл,
Кӗр калчи тухать-и кӑшӑл-кӑшӑл –
Эх, маттур та эс, тӑван кӗтесӗм!

Кӗмӗл шыв юхать-и шӑнкӑр-шӑнкӑр,
Хӗр ҫӑла анать-и чӑнкӑр-чӑнкӑр,
Туй лаши килет-и хӑнкӑр-хӑнкӑр,
Параппан янрать-и тӑнкӑр-тӑнкӑр –
Эх, хитре те эс, тӑван кӗтесӗм!

Каҫхи сад ларать-и тӑпӑл-тӑпӑл,
Ҫулҫисем ташлаҫ-и ҫӑтӑл-ҫӑтӑл,
Шӑпчӑксем юрлаҫ-и чӑвӑл-чӑвӑл,
Савнисем пуплеҫ-и шӑкӑл-шӑкӑл –
Эх, хавас та эс, тӑван кӗтесӗм!

# КУН ИРТЕТ ТЕ...

**Усăмлăн**



## КУН ИРТЕТ ТЕ...

Кун иртет те, килет ҫӗнӗ кун:
Ҫут ҫанталӑкӑн – ҫирӗп саккун.
Ҫамрӑк вӑхӑт ҫеҫ тек килес ҫук,
Ӑна сутӑн кайса илес ҫук.

Юр пекех шуралаҫҫӗ ҫӳҫсем,
Тӑртанаҫҫӗ питсем, аллӑсем.
Пурпӗрех ватӑлмаҫҫӗ чунсем,
Яшлӑхран уйрӑлмаҫҫӗ вӗсем.

Шурӑмпуҫӗ килет шуралса,
Вӑл ыран та килет шуралсах.
Яш кун-ҫул ҫеҫ калла ҫаврӑнмасть,
Чечексен ҫӗр-шывне таврӑнмасть.

Шыв юхать, ав, паян юрласа,
Вӑл ыран та юхать юрласах.
Хамӑр ҫеҫ сикес ҫук шухланса,
Ҫӳрес ҫук ӗмӗр ҫамрӑк пулса.

Варламан эпир халӑх ятне,
Шав ҫӗкленӗ ҫӗр-шыв хӑватне.
Тӗслӗх илтӗр пиртен яш ӑру,
Ыр сунатпӑр ӑна, пултару.

# ÇУРХИ КĂМĂЛ


Савăнăçлăн
Кăн - тăр - тан вĕç - се ки - леç - çĕ
Кĕ - мĕл сас - лă шăн - кăрч - сем.
Шу - рă шу - пăр пĕр - ке - неç - ç
Пах - ча - ри ул - муç - çи - сем.
Припев:
Эх, чу на çĕк - лен - те - реç - çĕ
Ы - тар - ми çур - хи сăн сем.
Шу - рă шу - пăр пĕр - ке неç - çĕ
Пах - ча - ри ул - муç - çи - сем.

## ]ÇУРХИ КĂМĂЛ

Кăнтартан вĕçсе килеççĕ
Кĕмĕл саслă шăнкăрчсем.
Шурă шупăр пĕркенеççĕ
Пахчари улмуççисем.
  Эх, чуна çĕклентереççĕ
  Ытарми çурхи сăнсем.
  Шурă шупăр пĕркенеççĕ
  Пахчари улмуççисем.
Ăшă варкăшсем килеççĕ
Кăнтăртан салам илсе.
Çумăрсем çуса иртеççĕ
Уй-хире телей сĕнсе.
  Эх, чуна килентереççĕ
  Ытарми çурхи сăнсем.
  Çумăрсем çуса иртеççĕ
  Уй-хире телей сĕнсе.
Хăнана пыма чĕнеççĕ
Пыл шăршиллĕ ĕшнесем.
Çутă юрату пиллеççĕ
Йăлтăр сарă чечексем.
  Эх, чуна хĕмлентереççĕ
  Ытарми çурхи сăнсем.
  Çутă юрату пиллеççĕ
  Йăлтăр сарă чечексем.
Илĕртӳллĕ-çке çур каçĕ
Йăлкăшаççĕ çăлтăрсем.
Савăк юрă шăратаççĕ
Сар хĕрсем, сар каччăсем.
  Эх, чуна вут хыптараççĕ
  Ытарми çурхи сăнсем.
  Савăк юрă шăратаççĕ
  Сар хĕрсем, сар каччăсем.

# КАШЛАСАМ, ВĂРМАНĂМ



## КАШЛАСАМ, ВӐРМАНӐМ

Кашласам, вӑрманӑм,
каш-каш-каш.
Кашласам, вӑрманӑм,
каш-каш-каш.
Эс пулсан тӗнчемӗр пурӑнать,
Малти ен хаваслӑн курӑнать.

Çусамах, ӑш çумӑр,
чаш-чаш-чаш,
Çусамах, ӑш çумӑр,
чаш-чаш-чаш,
Эс çусан çӗр-шывӑм савӑнать,
Çуталса чипер тум тӑхӑнать.

Кулсамах, хӗвелӗм,
йӑл-йӑл-йӑл,
Кулсамах, хӗвелӗм,
йӑл-йӑл-йӑл,
Эс кулсан тавралӑх çӗнелет,
Вӑй илсе кал-каллӑн çӗкленет.

Вӗрсемех, лӗп çилӗм,
вӑш-вӑш-вӑш,
Вӗрсемех, лӗп çилӗм,
вӑш-вӑш-вӑш,
Эс вӗрсен тӑван çӗр уçӑлать,
Çӗн ӗçе хастарлӑн пуçӑнать.

# АВӐТАТЬ, АВӐТАТЬ...

**Майӗпен**



## АВĂТАТЬ, АВĂТАТЬ...

Авăтать, авăтать...
Сарă тулă пуссинче
Путенийĕ авăтать.
Савăнать, савăнать...
Савнă кил ытамĕнче
Чун киленет, савăнать.

Авăтать, авăтать...
Çӳллĕ хăмăш хушшинче
Карăш кайăк авăтать.
Савăнать, савăнать...
Кӳршĕ-аршă хушшинче
Чун йăпанать, савăнать.

Авăтать, авăтать...
Аслă ĕшне варринче
Чăпар куккук авăтать.
Савăнать, савăнать...
Хурăнташсем патĕнче
Чун хĕпĕртет, савăнать.

Авăтать, авăтать...
Сенкер тӳпе айĕнче
Ăмăрткайăк авăтать.
Савăнать, савăнать...
Тăван чăваш çĕрĕнче
Чун çĕкленет, савăнать.

# ЭП ТЕЛЕЙЛĔ

**Мăнаçлăн**



## ЭП ТЕЛЕЙЛĔ

Мăшăрăм та пур,
Ачамсем те пур –
Эп телейлĕ.
Çавăнпа юрлатăп.

Аллăмсем те пур,
Ĕçĕм те ман пур –
Эп телейлĕ.
Çавăнпа юрлатăп.

Кураç-ха куçсем,
Утаç урасем –
Эп телейлĕ.
Çавăнпа юрлатăп.

Тăвансем те пур,
Тусăмсем те пур.
Эп телейлĕ.
Çавăнпа юрлатăп.

Çĕршывăм та пур,
Халăхăм та пур –
Эп телейлĕ.
Çавăнпа юрлатăп.

## АХ, МА УЛТАЛАНТӐМ-ШИ?

**Уҫӑмлӑн**



## АХ, МА УЛТАЛАНТĂМ-ШИ?

Тантăш-хĕрĕм çулана
Яла килчĕ Хăнана.
– Кăтарт, – терĕ, – йĕкĕтне –
Хаклам санăн ĕмĕтне.

Тантăша хам савнипе
Мĕншĕн паллаштартăм-ши?
Шаннипе-савăннипе
Ах, ма улталантăм-ши?

Тантăш пулчĕ çу касах
Пирĕнпе кашни касах.
Вăрттăн вăхăт иртнĕ май
Çавăрчĕ качча хăй май.

Халĕ тантăш ютшăнать,
Манн туспа çеç хутшăнать.
Ма хăнана килчĕ-ши?
Ма телее илчĕ-ши?

Тарăхатăп савнине,
Сисĭмерĕ суйнине.
Упраймарĕ туслăха,
Сутса ячĕ ютлăха.

# ĂÇТА ÇĔТРĔН-ШИ?



# ĂÇТА ÇĔТРĔН-ШИ?

Шав пĕрле йĕлтĕрпеле
Икĕ мăшăр йĕрпеле
Ыткăнаттăмăр. Анчах
Чарăнтăн тухма пачах.

Мĕскер пулчĕ, мĕншĕн-ши
Эс килме пăрахрăн-ши?
Те вăхăту çуккă-ши,
Те урăх çул тупрăн-ши?

Халĕ эпĕ пĕр-пĕччен
Хĕллехи уйра. Кичем.
Юнашар йĕр пуш-пушах,
Ярать темшĕн шухăша.

Хупламан юр сан йĕрне.
Ах, курасчĕ пĕр-пĕрне.
Икĕ мăшăр йĕрпеле
Ярăнасчĕ-çке пĕрлех.

# КĔТСЕМ САЛТАКА

**Вальс темпĕпе**



## КĔТСЕМ САЛТАКА

Савнипе тăратăп
Хурăн айĕнче.
Салтака каятăп
Ыран ир çинче.

Тусăмçăм, çырсамччĕ
Тăтăш çырусем.
Сăмахна тытсамччĕ:
Эс кĕтсе илсем.

Халăх ятне ямăп
Раççей çарĕнче.
Сыхă-сыхă тăрăп
Çĕршыв чиккинче.

Хĕсметре, туятăп,
Çăмăл иртмĕ кун.
Кĕç, ак, уйрăлатăп,
Пăлханать яш чун.

Çăлтăрсем çунаççĕ
Çӳллĕ тӳпере.
Ăраскал сунаççĕ
Халь вĕсем пире.

# САРĂ-САРĂ

**Савăнăçлăн**



## САРĂ-САРĂ

Сарă-сарă, сап-сарă,
Сĕм вăрманĕ, ай, сарă.
Кăмписем те, ах, сарă,
Мăйрисем те, ах, сарă.

Атьăр, вăййа тăсар-и,
Сиккелер-и, асар-и?
Кĕрле, яшлăх пасарĕ –
Аслă ăру каçарĕ.

Сарă-сарă, сап-сарă,
Сачĕ пирĕн, ай, сарă.
Çулçисем те, ах, сарă,
Улмисем те, ах, сарă.

Сарă-сарă, сап-сарă,
Уйĕ-хирĕ, ай, сарă.
Улăхĕсем, ах, сарă,
Чечекĕсем, ах, сарă.

Сарă-сарă, сап-сарă,
Пирĕн яшлăх, ай, сарă.
Хĕрĕсем те, ах, сарă,
Каччисем те, ах, сарă.

# ÇУРКУННЕ


Хаваслăн
Çӳ - çе пап - ка кă - ла - рать;
Ху - рăн çул - си - не са - рать,
Çĕ - мĕрт çеç - ке - не ла - рать
Çур - кун - не, çур - кун - не, çур - кун - не
Çĕк - лен - те - рет чĕ - ре - не çур - кун - не.

# ÇУРКУННЕ

Çӳçе папка кăларать,
Хурăн çулçинее сарать,
Çĕмĕрт çеçкене ларать
Çуркунне.
Çĕклентерет чĕрене
Çуркунне.

Хĕвел савса çупăрлать,
Кăнтăр çилĕ ачашлать,
Ăшă çумăр чашлатать
Çуркунне.
Ырлăх акать çĕр çине
Çуркунне.

Улăх-вар симĕсленет,
Ешĕл калча чӳхенет,
Пин-пин чечек хĕмленет
Çуркунне.
Илем пиллет тĕнчене
Çуркунне.

Каçпа уйăх йăл кулать,
Каччă хĕре тĕл пулать,
Хыттăн-хыттăн ыталать
Çуркунне.
Чăн юрату çуралать
Çуркунне.

# УТАТПĂР МАЛАЛЛАХ ПĔРЛЕ



## УТАТПĂР МАЛАЛЛАХ ПĔРЛЕ
## («ЭПИР ВĂЙЛĂ САВНИПЕ ПĔРЛЕ»)

Асах, çил-тăвăл, ур, кĕрле,
Тустар хаяррăн, сĕмсĕрле.
Пĕрех эпир савнипеле
Утатпăр малаллах пĕрле.

Алхас, кĕр каçĕ. Сĕм çĕрле
Хура сăннупала тĕлле.
Пĕрех эпир савнипеле
Санран хăрас çуках пĕрле.

Сăхах, çич ют, çăхав тĕрле,
Ылхан яр вĕççĕр путсĕрле.
Пĕрех эпир савнипеле
Сана çĕнетпĕрех пĕрле.

Инкек, эс кăлăх ан йĕрле,
Хĕçне пустуй ан хатĕрле.
Пĕрех эпир савнипеле
Санран хăватлăрах пĕрле.

# ИКСĔМĔРЕ АСĂРХАСАН

**Ăшшăн**



## ИКСĔМĔРЕ АСĂРХАСАН

Уйра пире пĕрле курсан,
Куллăмăра асăрхасан
Çурхи хĕвл пĕр ман çине,
Çурхи хĕвл пĕр сан çине
Савса сапать сар шевлине.

Çыр хĕрринче пĕрле курсан,
Калаçнине асăрхасан
Çырма юхать шăнкăртатса,
Вĕтĕ хумне сапаласа,
Иксĕмĕре сума суса.

Уçланкăра пĕрле курсан,
Эс манпала юрра тесан
Кашлать вăрман хавхаланса,
Юрлать вăрман саркаланса,
Иксĕмĕре телей сунса.

Вăй картинче пĕрле курсан,
Эс манпала ташша ярсан
Çиçсе вылять мĕн пур тĕнче,
Ташша ярать мĕн пур тĕнче,
Иксĕмĕре саламласа.

# САВĂНСА ЮРЛАМ-И ЮРРĂМА



## САВĂНСА ЮРЛАМ-И ЮРРĂМА

Хăна эп тăван çуртăмра,
Ват аттем те аннем – умăмра.
Ирĕке ярам-и чунăма –
Савăнса юрлам-и юррăма.

Ăраскал, телей кил-йышăмра,
Савнă арăм, хĕр-ывăл – çумра.
Ирĕке ярам-и чунăма –
Савăнса юрлам-и юррăма.

Эх, аван хурăнташ патĕнче,
Юнашар – кинпе шăллăм, пичче.
Ирĕке ярам-и чунăма –
Савăнса юрлам-и юррăма.

Уявра туссенчен хакли çук.
Тантăшпа пĕлĕш, кум пĕрле чух.
Ирĕке ярам-и чунăма –
Савăнса юрлам-и юррăма.

Ман тавра – кӳршĕсем, ялйышсем,
Куç тулли ытарми ентешсем.
Ирĕке ярам-и чунăма –
Савăнса юрлам-и юррăма.

# АСАТТЕНӖН ЙӐМРИНЕ...



# АСАТТЕНĔН ЙĂМРИНЕ...

Асаттенĕн йăмрине упраймарăм,
Урнă тăвăл хуçасран сыхлаймарăм,
Ун вырăнне çĕннине лартаймарăм,
Çавăнпах пуль ăраскаллă пулаймарăм.

Асанненĕн минтерне упраймарăм,
Пуç айне те хурса çывраймарăм,
Пехилне те ăшăма хываймарăм,
Çавăнпах пуль ăраскаллă пулаймарăм.

Атте панă çивĕч пуртта упраймарăм,
Вăрманта та пĕрене, ай, касаймарăм,
Хăтлă шурă кермен-пӳрт тăваймарăм,
Çавăнпах пуль ăраскаллă пулаймарăм.

Анне панă тухьяна упраймарăм,
Халалласа хам хĕрĕме параймарăм,
Йăх тивлетне малалла тăсаймарăм,
Çавăнпах пуль ăраскаллă пулаймарăм.

# ÇĔНĔ ÇУЛ ЮРРИ



## ÇĔНĔ ÇУЛ ЮРРИ

Çĕнĕ çул, сана кĕтетпĕр,
Эс, кивви, ӳпкевсĕр кай.
Ăраскал черкки çĕклетпĕр
Курантсем шакканă май.

Пурнăç килтĕр пирĕн тулăх,
Ырлăх кӳтĕр килĕшӳ.
Кĕвĕçӳ, пире ан çулăх,
Парăнсам эс, кӳлешӳ.

Тунсăх, хуйхă та салхулăх
Çухалинччĕç çул çинчен.
Кулăпа илем, сатурлăх
Ялкăшинччĕç питсенче.

Пĕрлĕх, туслăх, пĕтĕçӳлĕх,
Çынлăх, чунлăх, аслă чыс...
Вĕсене упринччĕ ӳлĕм
Куç шăрçи пек пирĕн йыш.

# ЮРАТУ – САР ТĔПЕЛ...



## ЮРАТУ – САР ТĔПЕЛ...

Юрату – чĕрери сар тĕпел.
Юрату – чи хĕрӳллĕ хĕвел,
Ик шевлийĕ – эпир санпала.
Çавăнпах вăл хĕрӳ пулмалла.

Юрату – шăнкăрти юханшыв.
Тасарах шыв эс тек тупăн-ши.
Ик çыранĕ – эпир санпала,
Çавăнпах вăл таса пулмалла.

Юрату – улăп пек аслă ту.
Пăхсан çĕлĕк ӳкет, ай, асту!
Ик тăррийĕ – эпир санпала.
Çавăнпах аслă та пулмалла.

Юрату – пахчари улмуççи.
Шурă тумлă, чечен, чун уççи.
Ик йуппийĕ – эпир санпала.
Çавăнпах вăл чечен пулмалла.

Юрату – тӳпери мăн хăлат.
Иксĕлми вăй – унра, чĕр хăват.
Ик çуначĕ – эпир санпала.
Çавăнпах вăйлă та пулмалла.

# ТӐЛПУЛУ

**Туйӑмпа**



# ТĔЛПУЛУ

Кĕçĕн Вылă ялĕнчен
Таврăннă чух Сĕнтĕре
Туле уйĕ варринче
Хирĕç пултăм пĕр хĕре.

Хам тĕле утса çитсен
Сăмах хушрăм: «Ăçтисем?»
Темшĕн питĕ именсе
Вăл каларĕ: «Йăлăмсем...»

Çак шур акăш умĕнче
Карт-карт сикрĕ яш чĕре.
Те вăл утма çул çинче
Кăмăлларĕ-ши хĕре?

Çаврăнса пике иртсен
Ăшшăн пăхрăм киленсе.
Хирĕç кулчĕ мăшăр куç,
Тамашаçăм, мĕн-ши ку?

# МАРЬЕНЕ ПĔР ВĔÇĔМРЕН...



## МАРЬЕНЕ ПĔР ВĔÇĔМРЕН...

Марьене пĕр вĕçĕмрен
Çырусем килеççĕ:
Икĕ каччă инçетре
Канăçа пĕлмеççĕ.

Пит пĕлесшĕн тĕпчесе:
«Юратан-ши, тусăм?»
Кăмăлне хĕр пĕлтерсе
Хыпарларĕ уççăн:

«Хаклă йĕкĕтсем, сире
Чунтанах саватăп.
Вут пек хĕрӳ чĕререн
Ак çапла калатăп:

Ăмăртуллă ĕçсенче
Пулĕ кам хастарлă,
Паллă ĕнтĕ, ун енчех
Манăн ăраскалăм».

# ПĔВЎ – АТĂЛ ХĂВИ, ЯШТАКА...



## ПĔВӲ – АТĂЛ ХĂВИ, ЯШТАКА...

Пĕвӳ – Атăл хăви, яштака,
Питӳ çутă, тулли, çаврака.
Ик куçу – ик кăвар, чăн-чăнах.
Кам-ши сана панă çак сăна?

Сăмахна эс калан шутласа,
Пуç тавра çичĕ хут çавăрса.
Шухăшу аслă, тĕрĕс, таса.
Кам-ши сана панă çак ăса?

Ылтăнах темелле кăмăлна,
Пур çынра эс куран тăванна.
Ăраскал та малашлăх сунан.
Кам-ши сана панă çак чуна?

Пурăнан çынсене юратса,
Тĕнчене хĕвел пек çутатса,
Таврана ăшă хум салатса.
Кам-ши янă сана çуратса?

# АКĂШСЕМ ТЕ ИШЕÇÇĔ ПĔРЛЕ



## АКĂШСЕМ ТЕ ИШЕÇÇĔ ПĔРЛЕ

Эс утатăн килне, Çӳлкаса
Вăйă хыççăн пĕччен шăхăрса.
Эп утатăп тăван Çĕнкаса
Çумра каччă çукран кулянса.

Акăшсем те ишеççĕ пĕрле
Шăпчăксем те вĕçеççĕ пĕрле.
Мĕншĕн пирĕн пĕрле пулас мар,
Ăраскал патне çул хывас мар?

Кăнтăрла урамра тĕл пулсан
Вăтанатпăр пăхмашкăн куçран.
Санăн та ăшăнта вут çунать,
Манăн та ăшăмра вут çунать.

Санăн та тем калас шухăш пур,
Манăн та тем калас шухăш пур.
Калама çеç хăюлăх çитмест,
Пăлханмасăр пĕр кун та иртмест.

# ПĂРЧĂКАН ПУЛЬ ТЕРЁМ ЭП САНА

**Хаваслăн**



## ПӐРЧӐКАН ПУЛЬ ТЕРӖМ ЭП САНА

Уй-хире тухсан сӑна-сӑна
Пӑрчӑкан пуль терӗм эп сана.
Пӑрчӑкан пек йӑрӑ пулнӑран,
Пур ӗҫе вӑр-вар ҫеҫ тунӑран.

Урамра курсан сӑна-сӑна
Акӑшах пуль терӗм эп сана.
Акӑш пек шур тумлӑ пулнӑран,
Ярӑнса ун евӗр утнӑран.

Вӑйӑра чухне сӑна-сӑна
Чӗкеҫех пуль терӗм эп сана.
Чӗкеҫ пек чӗлхеллӗ пулнӑран,
Савӑнса ӑш-пиллӗн кулнӑран.

Уявра савса сӑна-сӑна
Шӑпчӑках пуль терӗм эп сана.
Шӑпчӑк евӗр селӗм саслӑран,
Шӑпчӑк пек хитре юрланӑран.

# АСИЛЕТЁП, ЧУНĂМÇĂМ



# АСИЛЕТӖП, ЧУНӐМҪӐМ

Хурӑна, ай, курсассӑнах
Асилетӗп, чунӑмҫӑм, сана.
Ҫил вӗрет те, йывӑҫ авӑнать,
Сан ятна каланӑн туйӑнать.

Ҫурӑлатчӗҫ хурӑн ҫулҫисем,
Инҫете чӗнетчӗҫ ҫулусем.
«Сыв пул! – терӗн, –
килӗп кӗр ҫитсен.
Чун-чӗре санах савать. Кӗтсем...»

Чӗререн васкатрӑм вӑхӑта
Кӗтнӗ май ҫав хаклӑ саманта.
Кӗр иртет кӗҫ. Сивӗ хӗл ҫитет,
Эс ҫукран чун хурланса илет.

Ҫухатмастӑп шанчӑка пӗрех,
Эп сана кӗтсе илетӗпех.
Ӗненсем: эс манӑн чӗрере,
Чи хакли ҫак ҫутӑ тӗнчере.

# КАÇАРСАМ, САВНИÇЁМ



## КАÇАРСАМ, САВНИÇĔМ

Каçарсам, савниçĕм, каçарсам
Хам сăмах парсассăн тытайманшăн,
Ял çине тӳлеккĕн каç ансан
Çăл патне васкавлăн тухайманшăн.

Каçарсам, савниçĕм, каçарсам
Сан çуралнă куна пырайманшăн,
Ыр сунса, хисеплĕн пуç тайса
Шур чечек çыххийĕ парайманшăн.

Каçарсам, савниçĕм, каçарсам
Кăшт хăюллă, вăр-вар пулайманшăн,
Витерӳллĕн куçунтан пăхса
«Юрататăп» тесе калайманшăн.

Каçарсам, савниçĕм, каçарсам
Иксĕмĕр çĕн пурнăç пуçлайманшăн,
Пĕр çемьеллĕ, тăванлă пулса
Телее сăваплăн пайлайманшăн.

# ЙĂНĂШРĂМĂР ПУЛЬ



## ЙĂНĂШРĂМĂР ПУЛЬ

Сивĕ варкăш килчĕ çурçĕртен,
Татрĕ туслăха çинçе çĕртен.
Çын сăмахĕ уйăрчĕ пире –
Иксĕмĕр те кайрăмăр чире.

Халĕ ак пурнатпăр юнтарса,
Чунсене пĕр шелсĕр çунтарса.
Юратăва хамăр пурпĕрех
Пытарса усратпăр чĕрере.

Эс те, ав, çаплах пĕччен, хăрах,
Эп те, ак, çаплах пĕччен, хăрах.
Йăнăшрăм пуль эпĕ те кăштах,
Йăнăшрăн пуль эсĕ те кăштах.

Каçарар-и, тусăм, пĕр-пĕрне –
Уçăлма тухар-и кӳл хĕрне.
Юнашар утар-и пĕрех хут –
Вĕчĕхсех юлайтăр çичĕ ют.

Кайрĕ те иртсе хĕл. Çĕр çине
Çĕнĕрен çитейрĕ çуркунне.
Çуталса çиçеççĕ шевлесем,
Юрату пиллеççĕ чечексем.

# ИРТЕТ ЁНТĔ ХУРА КĔРКУННЕ...



## ИРТЕТ ЁНТӖ ХУРА КӖРКУННЕ...

Иртет ёнтӗ хура кӗркунне,
Аскӑн ҫил хӑвалать сив хумне,
Эп кӗретӗп салхун ял садне,
Асилетӗп савни сӑмахне.

Кайнӑ майӑн тухса инҫене
Килме пулчӗ килне кӗр енне.
Хӗл ҫитет – вӑл ҫаплах таврӑнмасть,
Виҫӗ уйӑх ҫыру та ҫырмасть.

Шӑнса кӳтрӗҫ садра чечексем,
Шанса кайрӗҫ кӗрен ҫеҫкисем.
Чунӑмра ҫеҫ ман тунсӑх сӳнмест,
Юрату ҫав-ҫавах сивӗнмест.

# УТАСЧĔ ПУРПĔР САНПАЛАН

**Уçăмлăн**



## УТАСЧĔ ПУРПĔР САНПАЛАН

Ан тив, алхастăр çил-тăман,
Ан патăрин утма-тăма.
Пăр çутăр, çаптăр урараn –
Утасчĕ пурпĕр санпалан...
ялан.

Ан тив, сив çумăр çутăрах,
Çĕре лапраллă тутăрах.
Хуплатăр, пӳлтĕр кăкăртан –
Утасчĕ пурпĕр санпалан...
ялан.

Ан тив, хаяр хĕл-шартлама
Çула хăтлантăр картлама.
Çунтартăр, кастăр пит-куçран –
Утасчĕ пурпĕр санпалан...
ялан.

Ан тив, хăр-шăрăх тăтăрах,
Йӳç тар ӳт тăрăх юхтăрах.
Вăй-хал илсе юратуран
Утасчĕ пурпĕр санпалан...
ялан.

# КИЛĔШЕТ ÇАВ, КИЛĔШЕТ

**Сарлакан**



## КИЛЁШЕТ ÇАВ, КИЛЁШЕТ

Чăваш хĕрне килĕшет
Сарă саппун, шур кĕпе,
Тухья, тевет, шӳлкеме.
Килĕшет çав, килĕшет.

Чăваш хĕрне килĕшет
Вăй картинче çаврăнни,
Сиксе сăвă калани.
Килĕшет çав, килĕшет.

Чăваш хĕрне килĕшет
Шăпчăк евĕр юрлани,
Пилĕк тытса ташлани.
Килĕшет çав, килĕшет.

Чăваш хĕрне килĕшет
Пурçăн çиппе çĕлени,
Капăр тĕрĕ тĕрлени.
Килĕшет çав, килĕшет.

Чăваш хĕрне килĕшет
Сарă каччăпа утни,
Çӳхе тутипе кулни.
Килĕшет çав, килĕшет.

# АХ, МУХМĂР КАСТАРАТЬ



## АХ, МУХМĂР КАСТАРАТЬ

Сантăр турĕ те ниме –
Шыв пек юхрĕ кĕрчеме.
Тытăнчĕ пуç кӳпчеме,
Çур кун хĕсрĕ чĕреме.

Чĕнчĕ хур пусма Паçук –
Хĕрли ĕçрĕм – чару çук.
Хĕрли те хаяр иккен –
Икĕ кун чикрĕ чикен.

Уçăп чун уçма мана
Кăчăк туртрĕ лавккана.
Çутти хĕртрĕ-çке юна –
Мухмăр пычĕ виç куна.

Тихăн кум пумилккинче
Ханша сыпрăм мĕн ирччен.
Хуйха сиртĕм ханшапа –
Çич кун халь ак – вырăнпах...

Ăш-чик эрех йышăнмасть,
Апат чĕптĕм те анмасть,
Тапхăр-тапхăр хăстарать,
Ах, мухмăр кастарать.

Ик эрне сухал хырман,
Уйăх мунчара пулман.
Чĕтĕреççĕ алăсем,
Курăнаççĕ шуйттансем.

Выçă ларас ачамсем,

Çĕтĕк-çатăк тумĕсем.
Пӳрте хутма вуттăм çук –
Вутта кайма мутăм çук.

Тарăхать арăм – Наçча:
«Ма кайрăм-ши, – тет, – каччă?
Ма турăм санпа ача –
Çемье шар курать анчах».

Тухрăм ахăр выльăха,
Пач çухатрăм çынлăха.
Калăр, епле урăлас,
Мухмăр иртмест – мĕн тăвас?

## ТУПМАЛЛИ


Кĕвĕ çулĕпе алла-аллăн ..................................... 3
Степанов И.Р. ..................................................... 4
Сантăр Аксар ..................................................... 5
Аннемĕр, эсĕ – сар хĕвел ................................ 6
Эх, маттур та эс, тăван кĕтесĕм .................... 7
Кун иртет те килет .......................................... 8
Çурхи кăмăл ..................................................... 9
Кашласам, вăрманăм ....................................... 10
Авăтать, авăтать ............................................... 11
Эп телейлĕ ......................................................... 12
Ах, ма улталантăм-ши?...................................... 13
Ăçта çĕтрĕн-ши?.................................................. 14
Кĕтсем салтака .................................................. 15
Сарă-сарă ........................................................... 16
Çуркунне ............................................................ 17
Утатпăр малаллах пĕрле ................................. 18
Иксĕмĕре асăрхасан ......................................... 19
Савăнса юрлам-и юррăма ................................ 20
Асаттенĕн йăмрине ........................................... 21
Çĕнĕ çул юрри .................................................. 22
Юрату – сар тĕпел ........................................... 23
Тĕлпулу ............................................................... 24
Марьене пĕр вĕçĕмрен ...................................... 25
Пĕвӳ – Атăл хăви, яштака ............................. 26
Акăшсем те ишеççĕ пĕрле ................................ 27
Пăрчăкан пуль терĕм эп сана ......................... 28
Асилетĕп, чунăмçăм .......................................... 29
Kaçарсам, савниçĕм ........................................... 30
Йăнăшрăмăр пуль .............................................. 31
Иртет ĕнтĕ хура кĕркунне ................................ 32
Утасчĕ пурпĕр санпалан ................................... 33
Килĕшет çав, килĕшет ...................................... 34
Ах, мухмăр кастарать ....................................... 35